# ЧĂН-ЧĂН МАЭСТРО

**Эпир шăп 45 çул каялла Канашри педагогика училищинче паллашрăмăр. Иксĕмĕр те эпир, учительсен ывăлĕсем, 1962 çулхи çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче, экзаменсене ăнăçлă тытса вун пилĕк çултах студент пулса тăтăмăр.**

**Çарта хĕсметре пулнă хыççăн Морис Николаевич пĕр çулталăк тăван Тăвайĕнчи вăтам шкулта музыкăпа юрă учителĕнче ĕçленĕ. Баянпа тата пианинăпа лайăх вылякан педагог кунта пĕр-ик уйăхрах утмăл шкул ачинчен тăракан хор йĕркелеме пултарнă.**



• *А.С.ЛЮБИМОВ, М.Н.ЯКЛАШКИН, А.Я.ЭШПАЙ ШУПАШКАР ЧУКУН ÇУЛ ВОКЗАЛĔНЧЕ.*

М.Н.ЯКЛАШКИН яланах хăйĕн пĕлĕвне ÿстерме тăрăшнă. Чăваш педагогика институчĕн музыка факультетĕнче вĕреннĕ вăхăтра Морис Николаевич паллă композиторпа, Чăваш радиопа телекурав çумĕнче йĕркеленĕ хор ертÿçипе тата унăн пĕрремĕш дирижерĕпе А.Г.Орлов-Шуçăмпа, унăн çумĕпе П.Г.Федоровпа паллашнă. Педагогика институтĕнчи преподавательсемсĕр пуçне Аристарх Гавриловичпа Петр Григорьевич М.Н.Яклашкиншăн чăн-чăн çывăх наставник пулнă. Шел те, аслă юлташĕсем иккĕшĕ те пурнăçран иртерех уйрăлчĕç. Морис Николаевич – А.Г.Орлов-Шуçăмпа П.Г.Федоровăн ырă йăлисене малалла тивĕçлипе аталантаракан, унчченхи хорăн, 1992 çултанпа – Чăваш патшалăх академи капеллин, чапне çĕршыв шайĕнче çĕкленĕ маэстро-профессор, Раççей халăх артисчĕ. Морис Николаевич паллă, хăватлă çак коллектива 1986 çултанпа пĕр улшăнмасăр ертсе пырать. Вăлах – унăн тĕп дирижерĕ.

Ăçта кăна хăйĕн концерчĕсене кăтартман пулĕ пирĕн капелла! Çирĕм çул каяллах радиопа телекурав хорĕ Венгрири Дьёндеш хулинче иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери музыка фестивалĕн дипломанчĕ пулса тăнă, К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх премине тивĕçнĕ. Пирĕн артистсем темиçе хутчен Раççейри композиторсен съезчĕсенче, Мускаври, Санкт-Петербургри, Хусанти, Чулхулари, Чĕмпĕрти, Йошкар-Олари чи чаплă керменсенче юрланă. Чăваш патшалăх академи капелли тăтăшах Атăлпа Урал тăрăхĕсенчи музыка фестивалĕсене хутшăнать.

Морис Николаевич 10-15 çул каяллах капелла çумĕнче симфони оркестрĕ йĕркелесси çинчен ĕмĕтленетчĕ. Çак ыйтупа республика Президенчĕпе Н.В.Федоровпа канашланă хыççăн 2000 çулта капелла çумĕнче тинех симфони оркестрĕ выляма пуçланă. Халĕ унта хĕрĕх музыкант.

М.Н.Яклашкин ертсе пыракан академи симфони капеллин репертуарĕнче, паллах, чăваш композиторĕсен тата халăх юррисем ытларах. Çав вăхăтрах пысăк концертсенче тĕнчипе паллă композиторсен хайлавĕсем те янăраççĕ. Пĕлтĕрхи ака уйăхĕн вĕçĕнче Чăваш патшалăх филармонийĕнче иртнĕ концерта Морис Николаевич чĕннипе Мускавран ятарласа СССР халăх артисчĕ, Патшалăх премийĕн лауреачĕ А.Я.Эшпай композитор тата тĕнчипе паллă гобоист, Раççей халăх артисчĕ А.С.Любимов килнĕччĕ. Вĕсем ун чухне Морис Николаевич ăсталăхне тивĕçлипе хакларĕç.

– Эпĕ хамăн ĕмĕрте вун-вун çĕршывра пулса курнă. Паллах, савăнăçлă самант нумай. Манăн чи илемлĕ юрăсене тата кĕвĕсене Морис Николаевич Яклашкин ертсе пыракан Чăваш патшалăх академи симфонин капелли хăватлă та чуна тыткăнламалла шăрантарни кăмăла уйрăмах çĕклерĕ. Яклашкин пек чăн-чăн маэстро Атăлпа Урал тăрăхĕнче питĕ сайра, – тенĕччĕ концерт хыççăн Андрей Яковлевич Эшпай.

■ **Петр СИДОРОВ**